Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

37 (7891) № * Юн кун, 2011 ҫулхи ҫу (май) уйӑхӗн 18-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Кашлаччӑрах эпир лартнӑ йывӑҫсем

11 класра вӗренекенсемшӗн кӗҫех юлашки шӑнкӑрав янӑрӗ. Орининти пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкул пӗтерекенсем вара хӑйсем хыҫҫӑн ырӑ йӗр хӑварма шутларӗҫ. Иртнӗ шӑмат кун вӑрман лартмалли наци кунӗнче вӗсем район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов тата шкул директорӗн воспитани енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ Т.П. Алексеева ертсе пынипе Патаккасси ялӗнче «2011 ҫулхи выпускниксен» аллейине хывса хӑварчӗҫ. Ҫак пархатарлӑ ӗҫе вара халӑхри ырӑ йӑлапа «ҫӑмӑл алӑран» пуҫлама шутларӗҫ. Шутларӗҫ те ачасем малтанхи йывӑҫсене икӗ Ивановӑн – Патаккассинче пурӑнакан район администрацийӗн пуҫлӑхӗпе Юрий Ивановпа Оринин шкулӗнче 11 класра вӗренекен Анатолий Ивановӑн пуҫламалла, тесе йышӑнчӗҫ. Ҫапла турӗҫ те. Пӗтӗмпе ҫак кун вӗсем 450 хурӑнпа ҫӑка лартса хӑварчӗҫ.

– Шӑпа кирек ӑҫта илсе ҫитерсен те эпир ҫакна лайӑх пӗлетпӗр: тӑван ырӑнта пире атте-анне, юратнӑ учительсем тата хамӑр лартса хӑварнӑ хурӑнсемпе ҫӑкасем кӗтеҫҫӗ. Пирӗн шӑллӑм-йӑмӑксем те пирӗн пекех ырӑ ӗҫ тума хӑнӑхса ӳсчӗр ҫак ҫамрӑк йывӑҫсене курса, – кӑмӑллӑн каласҫӗ ачасем.



Ачасемпе кун каҫах пӗрле ӗҫленӗ район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов вара ҫапла шутлать: ачасене ҫапла ӗҫе хӑнӑхтарса ӳстерсен, тӑван тавралӑха илем кӳрес ӗҫе вӗсене ытларах явӑҫтарсан тӑван Муркаш тӑрӑхӗ кунсеренех илемленсе пырӗ. Ачасем хӑйсем те хӑйсен пурнӑҫне хӑйсемех йӗркелесе пырассине лайӑхрах ӑнланса илӗҫ.

Вырсарни кун вара ку тӑрӑхра пурӑнакансем ҫитӗннисем те чӑтса тӑраймарӗҫ: тепӗр 200 хунав мехпарк патӗнче лартса хӑварчӗҫ. Пӗр кун маларах хӑйсен ачисем лартса хӑварнӑ аллейӑна илемлӗн карта тытса ҫавӑрнӑҫ. Пӗтӗм тӗнчери ҫемье кунӗнче аслисемпе ҫамрӑксем пӗр шухӑшлӑ пулсан кӑна пурнӑҫ пулнине хӑйсен ӗҫӗпе ҫирӗплетсе пачӗҫ.

Юнкӑ шкулӗнче вӗренекенсем те вӑрман лартмалли кун пурӗ 2 пин ҫамрӑк чӑрӑш лартса хӑварчӗҫ. Пыра-киле вӗсен тӑрӑшулӑхне пула Ҫармӑҫкасси ялӗ сывӑхӗнчи сырма та ишӗлме пӑрахӗ, Юнкӑпа Кӑпас ялне пырса кӗнӗ ҫӗрте те чӑрӑшсем ял ҫыннисемпе хӑнасене хапӑл туса таса сывлӑш парнелӗҫ.

Москакасси ял тӑрӑхӗнче пурӑнакансем вара Пӗтӗм тӗнчери ҫемье кунӗнче йӑлана кӗнӗ тӑрӑх тин ҫуралнисен аллейине пуҫтарӑнчӗҫ. Кунта вӗсем тем тӗрлӗ тӗм те лартса хӑварчӗҫ. Районти ЗАГС пайӗн ертӳҫи Е.Л. Иванова вӗсене уяв ячӗпе те, аллейра йывӑҫсен шучӗ хушӑннӑ ятпа та саламларӗ. Ку ял тӑрӑхӗнче кӑҫал 4 уйӑхра 14 ача ҫуралнӑ. Ку вӑл районӗпе чи нумай ача ҫуралас енӗпе 2-мӗш лайӑх кӑтарту шутланать.

Ҫакна та каласа хӑвармалла, тавралӑха тирпей-илем кӗртес, симӗслетес енӗпе йӗркеленӗ уйӑхлӑхра вара районӗпе пурӗ 20500 йывӑҫ лартса хӑварнӑ. Уйрӑмах Йӳҫкасси (4 пин), Оринин (3600), Ярославка (2600), Турай, Хорнуй, Шетмӗпуҫ, Юнкӑ (2-шер пин), Ҫатракасси (1400) ял тӑрӑхӗсенче нумай йывӑҫ лартса хӑварчӗҫ. Кашмашра ав ҫав хушӑра Афганистанра службӑра тӑнӑ В.В. Скворцов хӑйӗн мӑшӑрӗпе Татьяна Аркадьевнӑпа «афганецсен» аллейине чӗртрӗҫ. Ҫакӑн пек ырӑ тӗслӗхсем малалла тата та ытларах пулччӑр.

**Л. ПАВЛОВА.**

## Тасалӑх пирки пӗрле тимлер

**Тирпейлӗх ыйтӑвӗ тавра**

***Тирпей-илем, урамсемпе обществӑлла вырӑнсенчи тасалӑхпа йӗркелӗх ыйтӑвӗ ҫӗнӗлӗх мар. Ҫулленех ун пирки нумай калаҫатпӑр. Ҫурхи кунсем ҫитсе килнӗ май вара каллех ҫак ыйту тавра калаҫу пуҫарма тивет. Ялсенче, ҫулсем хӗррисемпе, автобуссем чарӑнакан вырӑнсенче унта та кунта ҫӳп-ҫап тултарнӑ михӗ кулисене асӑрхама тытӑнтӑмӑр. Йӗркеллӗ пулӑм-и ку? Ял тӑрӑхӗ турттарса кайма тивӗҫ-и ӑна? Тӳлев пирки тата? Ҫак ыйтусем ҫине район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумне, капиталлӑ строительство, архитектура тата пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх управленийӗн пуҫлӑхне В.Г. НИКИТИНА хуравлама ыйтрӑмӑр.***

**– Владимир Германович, чылайӑшне паян укҫатенкӗ тӳлевӗн ыйтӑвӗ интереслентерет. Килсенчи йӑлакаяшӗпе ҫӳп-ҫапа полигона турттарса каясси те тӳлевсӗрех пулаймӗ. Мӗн калама пултаратӑр кун пирки?**

– Ҫапла, иртнӗ ҫул районта ятарлӑ полигон хута кайнӑ май сӑнавлӑ майпа малтанлӑха ялсенчен ҫӳп-ҫап таврашне тӳлевсӗрех турттартӑмӑр. Тӗрӗсрех каласан ял тӑрӑхӗсен укҫитенки шучӗпе. Анчах та вӗҫӗм кун пек пулма пултараймасть. Ял тӑрӑхӗсен укҫӑран та хӗсӗк бюджечӗ ҫапла тума май паманть. Ҫавӑнпа та ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсемпе иртнӗ иртнӗ канашлура ҫакӑн пек йышӑну турӑмӑр. Халӗ урамсемпе ҫулсем хӗррисемпе купаласа хунӑ ҫӳп-ҫап миххисене ял тӑрӑхӗсем хӑйсен шучӗпех тиесе ӑсатӗҫ. Кайран вара июнӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса ял ҫыннисен ҫакӑншӑн тӳлеме тытӑнмалла пулӗ.

**– Тӳлев виҫи тата унӑн йӗрки епле пуласси пирки асӑнса хӑварсан та аванччӗ.**

– Ял тӑрӑхӗн администрацийӗ ял ҫыннисене хӑш кун тата мӗн вӑхӑта пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх предприятийӗн автомашини ҫӳп-ҫап патне килесси пирки пӗлтерӗ. Ҫынсен ҫав вӑхӑта хӑйсен ҫӳп-ҫап тавраш-не михӗсене е полиэтилен пакетсене тултарса хатӗрлемелле пулать. Кайран вара автомашина пырсан хӑйсенех тиесе ямалла. Автомашина ҫинчех водительпе пӗрле кассир та пулать. Укҫине ӑна тӳлемелле. Пӗр михӗшӗн 25 тенкӗ, пӗр витре кӗрекен полиэтилен пакетшӑн 5 тенкӗ илӗҫ.

**– Хӑнӑхман япала хӑшӗпӗриншӗн хаклӑ пек туйӑнмӗ-и?**

– Урӑхла нимӗн тума та май ҫук. Тӗрӗссипе нумай хваттерлӗ ҫуртсенче пурӑнакансем ҫӳп-ҫапшӑн унччен те тӳленӗ, халӗ те тӳлеҫҫӗ вӗт-ха. Ял ҫыннин те ҫакна хӑнӑхас пулать. Ҫавӑнпа та мӗн пур кирлӗ маррине миххе тултарма тӑрӑшмалла мар. Ҫунаканнине ҫунтарас, «марье витӗр» кӑларас пулать. Ял ҫыннин лаҫ та, мунча та пур. Кивӗ хут е ҫӗтӗк-ҫатӑк тавраш-не хатӗрлев кантурӗсем те йышӑнаҫҫӗ. Тимӗртӑмӑр укҫалла пухакансем сахал мар. Ӑна ӑсатасси ял ҫыннишӗн йывӑрлӑх мар.

Кантӑк, кӗленче тавраш-ӗпе те ыйтӑва татса парӑпӑр. Акӑ Мӑн Сӗнтӗр райповӗн магазинӗсем патӗнче ҫавна валли ятарлӑ контейнерсем вырнаҫтарса панӑ е уйрӑм вырӑнсем йӗркеленӗ. Ҫынсем унта сӑра-эрех кӗленчисене те, ваннӑ кантӑка та кайса пӑрахма пултараҫҫӗ. Вӑхӑтран вӑхӑта ӑна райпо тиесе ӑсатса тӑрӗ. Уншӑн укҫа тӳлемелле пулмасть. Ҫитес вӑхӑтрах Муркаш райповӗ те ҫак ӗҫе йӗркелеме палӑртать. Тӗрӗссипе ку ӗҫе тытӑннӑ та ӗнтӗ.

**– Хальхи вӑхӑтра пластик савӑтсемлӗ продукци нумай сутаҫҫӗ. Пушаннӑ савӑта вара ҫунтарма юраманнине пӗлетпӗр.**

– Ку ыйтӑва та татса парассипе ӗҫлеместпӗр мар. Ӑна вырнаҫтармалли адрессем, ку енӗпе ӗҫлекен ҫынсем шыратпӑр. Тӗрӗссипе пластик савӑтсем таса пулсан вӗсене пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх предприятийӗ те тиесе турттарма хирӗҫ мар.

**– Тата ҫавӑн пирки ыйтса пӗлни те ытлашши пулмӗ. Хӑшӗ-пӗри ҫӳп-ҫапа сортласа мӗн аппаланас, тултарас та ҫын курман чух кӑларса лартас е ӑҫта та пулин кайса пӑрахас тейӗ. Кун пеккисене мӗн калама пултаратӑр?**

– Уй куҫла, вӑрман хӑлхаллӑ тесе ахальтен каламан. Тавралӑха ҫакӑн пек варалакансенчен ыйтасси те ҫирӗпрех пулма тивӗҫ. Ҫын сӑмахпа каланине ӑнланмасть, ӳкӗте кӗмест пулсан пӗрре штраф тӳлесен, тепре укҫа кӑларса хума тивсен виҫҫӗмӗшӗнче кун пек хӑтланма тӑхтаса тӑрӗ. Ҫапах та пирӗн хушӑра ӑнланулисем ытларах пулӗҫ тесе шутлатӑп.

**В. ШАПОШНИКОВ калаҫнӑ.**

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотипе наградӑланӑ

***Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 2011 ҫулхи апрелӗн 26-мӗшӗнчи 371 № йышӑнӑвӗпе ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:***

– **Елена Иувентиновна ПЕТРОВӐНА**, «Нефтересурс» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑн 12 № автозаправка станцийӗн аслӑ операторне – нумай ҫул хушши тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн тата обществӑлла ӗҫсене активлӑ хутшӑннӑшӑн;

– **Вячеслав Федорович КИСЕЛЕВА**, ачасемпе ҫамрӑксен В. Егорова ячӗпе хисепленекен Муркашри спорт шкулӗн преподаватель тренерне – нумай ҫул хушши тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн, физкультурӑпа спорта аталантарас ӗҫе пысӑк тӳпе хывнӑшӑн тата сывӑ пурнӑҫ йӗркине пропагандӑланӑшӑн.

***Нумай ҫул хушши тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 2011 ҫулхи майӑн 6-мӗшӗнчи 401 № йышӑнӑвӗпе ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:***

– **Валериан Артемьевич КАРПОВА**, «Герой» ял хуҫалӑх производство кооперативӗн тракторист-машинистне;

– **Дмитрий Петрович ВОРОБЬЕВА**, «Ростелеком» уҫӑ акционер обществин районсем хушшинчи Кӳкеҫри сыхӑну узелӗн Муркаш районӗнчи участокӗн электроника инженерне;

– **Владимир Иванович СЕМЕНОВА**, «Ростелеком» уҫӑ акционер обществин районсем хушшинчи Кӳкеҫри сыхӑну узелӗн Муркаш районӗнчи участокӗн лини сооруженийӗсен тата радиофикаци электромонтерне.

**Ҫур аки – 2011**

## Ака вӗҫленсе пырать

Районти пӗрлешӳллӗ тата хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенчен тӑратнӑ оперативлӑ кӑтартусене пӑхсан Муркаш енри ҫӗр ӗҫченӗ уяр кунсенчи кашни сехете уй-хирте иртерет. Ҫу уйӑхӗн 17-мӗшӗ тӗлне районти пур харпӑрлӑх формиллӗ хуҫалӑхсем ҫуртрисене пӗтӗмпе 5530 гектар ҫинче (64 процент) акса хӑварнӑ. Ака ӗҫӗсене «Восток», Ильич яч. хис., «Оринино», «Свобода» пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсемпе В. Горбунов, А. Афанасьев, А. Пихтеров хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче вӗҫленӗ.

## Ҫӗр улми лартаҫҫӗ

Тыр-пул акас ӗҫ вӗҫленсе пынӑ май хуҫалӑхсем ҫур аки ӗҫӗсене «иккӗмӗш ҫӑкӑр» пуссисене куҫараҫҫӗ. Ӗнерхи кун тӗлне районта ҫӗр улмине пӗтӗмпе 170 гектар ҫинче лартса хӑварнӑ. Кунта «ВаСем» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество ӗҫченӗсем хастар. Вӗсем кӗске вӑхӑтрах 55 гектар ҫӗр улми лартса хӑварнӑ.

**А. БЕЛОВ.**

**Информаци кунӗ**

## Паянхи пӗлтерӗшлӗ ыйтусемпе

Паян районта черетлӗ информаци кунне ирттерме палӑртнӑ. Унӑн теми анлӑ: «2011 ҫулхи ҫуллахи таппӑрта ачасемпе ҫамрӑксен канӑвне, сывлӑхне ҫирӗплетессине йӗркелесси тата ӗҫе явӑҫтарасси ҫинчен; пушар хӑрушсӑрлӑхӗ, сут ҫанталӑка сыхласси, вӑрмансем лартса ҫӗнетесси, «Вӑрман кунӗ» акци ирттернӗ май ҫынсем лартас ӗҫсене хутшӑнасси ҫинчен».

Республикӑран килекен тата район администрацийӗн, федераллӑ органсен район шайӗнчи ответлӑ ӗҫченӗсем ушкӑнсене пайланса Ильинка, Хорнуй тата Катькас ял тӑрӑхӗсенче пулаҫҫӗ, вӗсен территорийӗсенчи сывлӑха сыхлас ӗҫ, вӗрентӳ учрежденийӗсенчи, ытти предприятисенчи ӗҫ коллективӗсемпе тӗл пулаҫҫӗ.

**Хамӑр инф.**

**Патриотла воспитани**

## Ӑмӑртусем вӑйлисене палӑртрӗҫ

Майӑн 13 – 14-мӗшӗсенче районти ҫамрӑк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» хӗрӗх виҫҫӗмӗш финал вӑййисем иртрӗҫ.

Сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытса пурӑнма, йывӑр ларутӑрура харпӑр хӑйне тытма вӗрентекен тата ҫамрӑксене патриот туйӑмне вӑйлатма пулӑшакан ӑмӑртусене пурӗ 36 команда хутшӑнчӗ: 8 «Орленок» командиӗ, 21 «Зарница» команди тата 5 ҫарпа патриот клубӗ.

Муркашри вӑтам шкул, Орининти вӑтам шкул командисем тата Муркашри вӑтам шкулти «Родина» ҫарпа патриот клубӗ республика вӑййисенче район чысне хӳтӗлеме тивӗҫ пулчӗҫ. Ӑнӑҫусем сунатпӑр ҫамрӑксене.

**Н. АНДРЕЕВА.**

Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ

# Çуралнă кунранах регистрацилеме тивĕç

***– Обязательнăй пенси страхованийĕ тĕлĕшпе çĕнĕлĕхсем пурри пирки илтнĕччĕ. Тĕплĕнрех каласа пама май çук-ши?***

**В. СИЛАНТЬЕВА.**

– Чăваш Республикинче ачасен 56 процентне обязательнăй пенси страхованийĕн системипе страхланă. 2011 çулхи июнĕн 1-мĕшĕччен татах 107,4 пин ача обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельствине илĕ.

Чăвашстат прогнозĕ тăрăх çу кунĕсем тытăннă тĕле республикипе 18 çула çитмен 248,5 пин ача пулмалла. Вĕсенчен кашнинех обязательнăй пенси страхованийĕн системипе страхламалла. Пенси страхованийĕн свидетельствинче (симĕс тĕслĕ пластик карточкăра) кăтартнă харпăр хăйĕн лицевой счечĕн номерĕ патшалăх социаллă тата медицина пулăшăвĕ панин сведенийĕсене шута илме кирлĕ. Çак йĕркене 2010 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă 326-ФЗ № «Раççей Федерацийĕнчи обязательнăй медицина страхованийĕ çинчен» Федераллă саккунра палăртнă. 1996 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче йышăннă 27-ФЗ № «Обязательнăй пенси страхованийĕн системинчи харпăр хăйĕн (персонифицированнăй) учечĕ çинчен» Федераллă саккуна улшăнусем кĕртнĕ: халĕ вара ачасене çуралнă кунранах регистрацилеме тивĕç.

Асăннă саккунсем вăя кĕриччен обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельствисемпе инвалидноçа е çемьери тăрантаракана çухатнине пула пенси илсе тăракан, ача амăшĕн капиталĕн сертификатне панă çемьесенчи ачасене, кунпа пĕрлех каникул кунĕсенче ĕçлекен 14 çултан иртнĕ ачасене тивĕçтернĕ.

Пур ачана та обязательнăй пенси страхованийĕн системипе регистрацилес тĕлĕшпе вĕрентӳ, сывлăха сыхлас ĕç, социаллă хӳтлĕх органĕсемпе, ЗАГС пайĕсемпе çыхăнса ĕçлесе пыма тивет. Шкулсемпе ача сачĕсенче ашшĕ-амăшĕсемпе, вĕренекенсемпе тĕл пулусем йĕркелетпĕр, унтах обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельствисене паратпăр. Çуралакан ачасен ашшĕ-амăшĕ ЗАГС пайĕнче ача çуралнине çирĕплетекен свидетельствăпа пĕрлех ачана обязательнăй пенси страхованийĕн системипе страхламалли пирки ăнлантарса панин памяткине те илет. Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене çӳремен ачасен ашшĕ-амăшне памяткăсене поликлиникăсенче е социаллă хӳтлĕх пайĕсенче параççĕ. Памяткăра ачасен обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельствине илме РФ Пенси фончĕн хăйсем пурăнакан вырăнти управленине пымалли, пĕрле паспорт тата ача çурални çинчен панă свидетельство пулмалли пирки ăнлантарса панă.

# Пулас пенси виçи хĕрарăмсемшĕн пĕлтерĕшлĕрех?

***– Пулас пенси виçине хăйсен ирĕкĕпе взноссем хывса ӳстерес енĕпе лару-тăру районта мĕнлерех-ха?***

**А. ВАСИЛЬЕВА.**

– Çулталăк пуçланнăранпа хăйсен пулас пенси виçине ӳстерме районĕпе 100 пин тенкĕ ытла (республикипе 5 миллион тенкĕ) взноссем куçарса панă. Патшалăх финанслансă май ку взноссем икĕ хут ӳсеççĕ.

Пенсисене патшалăх финанслассин программине хутшăнаканăн хăйĕн пулас пенси фондне çулталăкне 2 пин тенкĕрен тытăнса 12 пин тенкĕ таран куçарса памалла. Çулталăкра пĕр хут е уйăхсерен те тӳлесе тăма юрать. Укçана çыннăн хăй ĕçлекен предприяти бухгалтерийĕ урлă та куçарма май пур е кирек хăш банка пырса тӳлемелле. Асăннă программăна хутшăнакансем взноссен 20 процентне банксене хăйсем пырса тӳленĕ, 80 процентне ĕç вырăнĕнчен куçарнă.

Взноссене куçарса памалли тӳлев квитанцийĕсене, Перекет банкĕн регионсенчи реквизичĕсене Пенси фончĕн сайтĕнче (wwwĕpfrfĕru) вырнаçтарнă. Взноссене çавăн пекех Перекет банкĕн тӳлев терминалĕсем урлă та куçарма пулать. Çавна валли Пенси фончĕн управленийĕнче ятран паракан нумай хут усă курмалли штрих-кодлă квитанци илес пулать.

Паянхи куна районĕпе патшалăх пенсисене финанслассин программине хутшăнма ыйтса çырнă заявленисем 660 (Чăваш Республикипе 106 пин заявлени ытла) йышăннă. Программăна хутшăнас кăмăллисенчен ытларахăшĕ 40 çула çитмен çамрăксем (55 процент) тата 40 çултан тытăнса 60 çула çитичченхисем (43 процент). 60 çул урлă каçнисем 2 процент. Хĕрарăмсем программăна активлăрах хутшăнаççĕ: кун пеккисем пĕтĕм йышран 62 процент.

Патшалăх пенсисене финанслассин программине 2013 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен хутшăнма пулать. Заявленисене Раççей Пенси фончĕн клиент службисенче, çавăн пекех трансферагент центрĕсенче – банксенче, патшалăххăн шутланман пенси фончĕсенче тата пĕр-пĕри алă пуснисене çирĕплетессипе Раççей Пенси фончĕпе килĕшӳ тунă ытти организацисенче те йышăнаççĕ. Патшалăх услугисен интернет-порталĕ (www.gosuslugi.ru) урлă та программа участникĕ пулса тăма пулать.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

Майăн 18-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери музейсен кунĕ

# Иртнине куç умне кăлараççĕ

Сĕтел çинчи календаре уçкаласа ларатăп. Акă майăн 18-мĕшне Пĕтĕм тĕнчери музейсен кунĕ тесе палăртнă. Çийĕнчех эпĕ мĕнле музейсенче пулса курнине аса илме пуçăнтăм.

Паллах чи малтан Чăваш Республикин Шупашкарти тĕп музейĕнче (халĕ ăна наци музейĕ теççĕ) пулнине аса илтĕм. Ку вăл иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсен варринче хĕллехи каникул кунĕсенче, вăтам классенче вĕреннĕ чухне пулнăччĕ. Тĕп музей кивĕ чиркӳ çуртĕнче Хĕрлĕ площадьпе юнашар вырнаçнăччĕ. Халĕ унта залив ĕнтĕ.

Пиччепе (аттен шăллĕпе) инке хăйсен кĕçĕн хĕр ачипе иксĕмĕре сире музей кăтартар-ха терĕç. Вĕсене музейра авалхи чăвашсен хура пӳрчĕ пурри ытларах интереслентернĕ. Чăннипех те хура пӳртре кăмакара вутă çунать. Мăрье çук. Кăмака çумĕнче старикки çăпата калăплать, карчăкĕ вара кĕнчелепе сӳсрен çип арлать. Чăннипе çавăн хыççăн пулĕ эпĕ те пурăна-киле кĕнчеле арлама та, маларах çăпата хуçма та (ĕлĕк çапла калатчĕç) вĕрентĕм.

Музейра пысăк шурă сысна та пурччĕ. Патнех пырасран хăю та карнăччĕ. Анчах та алă çитнĕ пирки эпĕ сыснана хытах тĕксе пăхрăм. Сысна тени пĕрех тайăлчĕ, кăшт çеç урайне лаплатса ӳкмерĕ. Пĕр-икĕ хутчен хăлт-хăлт силленкелерĕ те вырăнне ларчĕ. Çан-çурăм сĕрлесе илчĕ. Çавăн хыççăн пирĕн инке манран чылай вăхăт: «Коля музейра сыснана тĕксе ӳкеретчĕ вĕт»,– тесе кулкалатчĕ.

Хам пулса курнă ытти музейсенчен Украинăри Львов хулинчи аптека, автомашинăсен тата мотоциклсен, йĕтрепе перекен пушкăсен музейĕсене асăнса хăвармалла. Мускавра Раççейри тĕп истори музейĕнче, Шереметьев граф керменĕнче, Пĕрремĕш тĕнче вăрçине сăнлакан панорамăра, Кутузов фельдмаршалăн Бородино патĕнчи штаб çуртĕнче пулса курма тивнĕ. Литвара асра юлни вара вăл – 10 метр çӳллĕш (е ытларах та пулĕ) орган тата «1000 чертей» музей пурри.

**Н. ПЕТРОВ,**
**ĕç ветеранĕ.**
Нискасси ялĕ.

Йĕрке хуралĕнче

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Паянхи кăларăма Муркаш районĕпе ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕн дознани ушкăнĕн аслă дознавателĕ, милици майорĕ Л.А. ЯДЫКОВА ертсе пырать.***

## Эрех-сăра ырă тумасть

Шел пулин те юлашки вăхăтра хĕрарăмсем эрех-сăрапа ытларах туслашни палăрма пуçларĕ. Вĕсем вара кун-çул парнелекенсем тата кил вучахне упракансем. Анчах та пурнăçра урăхларах килсе тухать çав.

Акă мартăн 30-мĕшĕнче Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Очăкасси ялĕнчи пĕр хĕрарăм Муркаш райповĕн лавккинчен 0,5 литр кĕрекен, 115 тенкĕ тăракан «Платиновый стандарт» шурă эрех вăрлать, сутуçăран та шикленмест.

Пĕр хăнăхнă йăлапа-ши апрелĕн 1-мĕшĕнче те çак ĕçех пурнăçлать, «Златорусская» шурă эрех вăрлать. Çапла вара 30 çултан иртнĕ вăй питти хĕрарăм преступлени тăвать, эрех-сăра кăмăллаканскер РФ УК 161 статйин 1 пайĕнчи йĕркене пăсать.

## Пĕр-пĕрне килĕштерсе пĕрлешмен-и?

Пĕрлешнĕ чухне çаплах пулнă пулĕ те анчах мĕншĕн-ха кун-çул тăсăлнăçем пĕр-пĕрин хушшинчи хутшăну сивĕнсех пырать?

1982 çулта çуралнă арçын çынлăха çухатать, унра тискер чĕр чун туйăмĕ вăй илет. Вăл арăмне майĕнчен пăвать, вĕлерессипе хăратать. Пӳтсĕр арçыннăн тискер хăтланăвĕ хĕрарăм кĕлеткине сиенлетет.

Халĕ вара иккĕшĕн тĕлĕшпе те йĕрке хуралçисем тимлеççĕ, яваплисене ответ тыттарма хатĕрленеççĕ. Куратăр ĕнтĕ кирек епле ĕçĕн те хăйĕн виçи тата йĕрки пулмалла. Алăна вара нихăçан та ирĕке ямалла мар, унсăрăн ӳкĕнмелле пулĕ, ахальтен каламан ĕнтĕ халăхра чавса çывăх та çыртма çук тесе.

Кирек епле йĕркене пăсакан та ял тăрăхĕн тата участокри милици уполномоченнăйăн кулленхи тимлĕхĕнче пулмалла, вĕсемпе тачă ĕçлемелле, калаçусем ирттермелле. Çавăн пекех ял старостисен те профилактика ĕçĕнчен аякра пулмалла мар.

Следстви комитетĕнчен

# Мĕн хĕтĕртнĕ-ши?

Ашшĕ-амăшĕ чылай чухне ача-пăча ăçта тата мĕн хăтланса çӳренине пĕлмест те. Çамрăксем вара ытларах ирĕк те савăк пурнăçа кăмăллаççĕ. Хăш чухне ĕç мĕнпе вĕçленессе чухламаççĕ. Вĕсен пӳтсĕрле хăтланăвĕ чуна çӳçентерет. Акă апрелĕн 12-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрти пĕр хваттерте ушкăнпа пурнăçланă сĕмсĕрле пĕр ĕç пулса иртнĕ. Хĕрсем хушшинче харкашу тухнă. 17 – 18 çулсенчи тăватă хĕр пĕр пĕлĕше ирĕкрен хăтарнă, хваттертен тухма чарнă. Çапла тума пĕри пуçарнă, ыттисем килĕшнĕ. Мĕскĕне 5 сехет хушши хваттерте ирĕксĕрленĕ, хĕненĕ, ыттисемпе хутшăнма ирĕк паман. Çапла вара преступлени тунă хĕрсем тĕлĕшпе халĕ йĕрке хуралçисем ĕçлеççĕ, тĕпчев ĕçне ирттереççĕ.

**В. ДОЛГОВ,**
**уйрăмах пĕлтершлĕ ĕçсен следователĕ,**
**юстици капитанĕ.**

Истори страницисем

# Иккĕмĕш Ваçкассинчи меценат

Раççейре Морозовсем, Третьяковсем, Демидовсем тата нумай пуян хăйсен ыр кăмăллăхĕпе палăрнă. Чăвашра та ун пеккисем нумаййăн пулнă. Уйрăмах Ехрем хуçа, Етĕрнере Таланцевсем тăлăхсем валли приютсем, шкулсем, больницăсем уçнă. Вĕсем лартнă çуртсемпе халĕ те усă кураççĕ. Вĕсен йăхĕсене тахçанах пĕтернĕ ĕнтĕ.

Ĕлĕк-авал пирĕн ял вырăнĕнче вăрман кашласа ларнă. Тăшмансем тата вăрă-хурахсем çаратнине пула сĕм вăрман варринче çăл куçлă çырма хĕрне чăвашсем тарса килсе вырнаçнă. Халап тăрăх анатрарах пурăнакан чăвашсем юхан шывпа турпас юхнине асăрханă та хăйсенчен те тăвалла çынсем пурăнаççĕ пулĕ тесе юхан шыв тăрăх кайма шутланă. Икĕ тус – Ваçлисем юхан шыв тăрăх тăвалла çула тухаççĕ. Муркашран юхса тухакан юхан шывпа Хорнай ялĕ енчен килекенни тĕлĕнче вĕсем уйрăлаççĕ, пĕри Муркаш енчен килеккеннипе каять, вăл аслăраххи пулнă пулмалла, пырса тухнă яла Первое Васькино тенĕ, кĕçĕнни хальхи Хорнай ялĕ вырăнне пырса тухнă, ăна Второе Васькино тенĕ. Çапла ялсем пуçланса кайнă теççĕ. Второе Васькино XX ĕмĕр пуçламăшĕнче 4 яла пĕрлештерсе тăнă: Хорнай, Чиканар, Пашалукасси, Кĕсми (XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Кузьмой тесе çырнă, халĕ Чăвашла Кĕсми теççĕ). Ял таврашĕнче нумай хыр ӳснĕрен Второе Васькино ялне Хыркасси тенĕ (документсенче «Сосновой» тени те тĕл пулать). Халĕ те Муркаш, Шаптак, Çурлатри ялĕсенчи ватă çынсем пирĕн яла Хыркасси теççĕ, Сĕнтĕр енчисем Хыркасси Муркаш теççĕ.

Иккĕмĕш Ваçкассинче ачасене 1882 çултах ашшĕ-амăшĕсем тăрăшнипе ялти пуян Афанасий Димитриевăн (Комаровсен) икĕ хутлă çуртĕнче вĕрентме пуçланă. 1896 çулта çеç (хăшпĕр аса илӳсенче 1897 çул тенĕ) ялта шкул лартнă, ку вăл ялти хресчен çурчĕ кăна пулнă. Шкул Пашалукассипе Кĕсми ялĕсем хушшинче уйра ларнă. Ку шкул çурчĕ хальхи уйрăм çыннăн «Удача» магазинĕ вырăнĕнче пулнă.

Çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче шкулта вĕренекенсен хисепĕ ӳссех пынă. Çак çурт пурне те тивĕçтерме пултарайман. 1903 çулхи августăн 10-мĕшĕнче ял старости Петров пуçарнипе Иккĕмĕш Ваçкассинчи хресченсен пухăвне ирттернĕ. Пухура 147 çын пулнă. Приговорта (халĕ ăна протокол теççĕ) пухура пулнисен хушамачĕсемпе ячĕсене те çырса тухнă. Протокола вулăсри писарь çырнă пулмалла. Пуху çĕнĕ шкул валли малтанхи шкул çумĕнчи никам усă курман çур десятин (пĕр десятин 2400 тăв. сажень, 10925 тăв. м) çĕр уйăрнă. 1903 çулхи августăн 12-мĕшĕнче çак ялти Яков Игнатьевич Игнатьев хресчен Чикме уесне заявленипе тухать. Вăл Иккĕмĕш Ваçкассинчи çĕнĕ шкул çуртне лартса пама пулать, виçисене палăртать: тăршшĕ 6 сажень (1 сажень 2,1338 м), сарлакăшĕ 5 сажень. Çав çуртрах учитель хваттерĕ, ăна валли мунча, нӳхреп тата ытти хуралтăсем туса пама пулать. Шкул çумĕнче сад ĕрчетме йĕри-тавра карта тытса çавăрма, кил хушши хапхи, çынсем çӳреме калитке туса пама пулать. Шкулне тунă хыççăн 12 çул хушши хăех тытса тăма пулать. Вутă туянма, хутса ăшăтма тата хуçалăхри вак-тĕвек ĕçсене тума уес управинчен çулталăкра 300 тенкĕ ыйтать. Чикме уесĕнчи çĕр управи Я.И. Игнатьев ыйтăвне тивĕçтерсе шкул тума ирĕк парать. Заявлени айне Я. Игнатьев алă пусма пĕлмен пирки Чикмери мещен Михаил Красильников алă пуснă.

1903 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнче 9 çынран тăракан ушкăн (актра хушамачĕсене, ячĕсене тата ашшĕ ячĕсене те палăртнă) шкул валли малтанхи пĕчĕк шкул çурчĕпе юнашарах çĕр уйăрса шалчасем çапса тухнă. Малтанах каларăм ĕнтĕ, вăл вăхăтра Кĕсмипе Пашалукасси ялĕсем хушшинче уй выртнă. Яков Игнатьевич çийĕнчех ĕçе тытăннă. Атăл тепĕр енче шкул валли йывăç хатĕрлеме пуçланă, Атăл шăнсан пĕренесем турттарса вĕсене шкул патне купаланă.

Анчах!? Достоевский каланă пекех ыр кăмăллăхпа юнашарах хаярлăх çӳрет. Н.Я. Шатровпа пулса иртни те çакнах çирĕплетет. Малтанхипе танлаштарсан пысăкрах шкул лартакана ура хуракансем те тупăнаççĕ. Пирĕн аслă вĕрентекен И.Я. Яковлев чăвашсен ку туйăмĕ пысăк пулнине палăртнă. Эсĕ ыттисенчен пысăкрах ӳсĕм тусан сана такăнтарма тăрăшаççĕ е сан ятна вараласçĕ. Пулманнине шутласа кăларса халăх хушшинче сараççĕ. Сăмах май каласан ку туйăм пирĕн хушăра халь те пур-ха! Пашалукассинче те хăш-пĕр çынсем хăйсенчен инçех мар пысăк шкул лартасшăн пулман. Кун пирки Петр Павловпа Петр Николаев Чикме уесĕнчи çĕр управине çитнĕ. Хăйсем хутла пĕлмен пирки писаре çăхав (жалоба) çыртарнă. Унта пухура пулакансене Яков Игнатьевич витрипех шурă эрех (водка) ĕçтерсе çĕр илчĕ тесе евитленĕ. Халĕ пĕренесене пирĕн йĕтем çине пăрахса тултарчĕ тесе çырнă. Хăйсем алă пусма та пĕлмен пирки çăхав айне темле Дмитрий Сидорова алă пустараççĕ. Е нимĕнле Сидоров та пулман, ĕлĕкрен пыракан анлă сарăлнă «Иванов, Петров, Сидоров» хушамачĕсемпе усă курса писарь, лайăх тӳленине кура, хăех «Сидоров» тесе çăхав айне алă пусса яма та пултарнă. Çăхавра Сидоровăн нимĕнле паспорт даннăйĕсем те çук.

Хаçат ăстисем çырнă тăрăх Америкăра ун пек туйăм çук теççĕ. Пысăкрах ӳсĕм тăвакана мухтаççĕ кăна. А.С. Грибоедов пек каласан Я.И. Игнатьевăн «Ыр кăмăллăха пула инкек» («Горе от доброты») тӳсме тивнĕ. Шкул тума пĕренесем турттарса хунă хыççăн çавăн пек шухăшлă çынсем пулни чăнахах та инкекех пулнă ĕнтĕ. Ку пĕрремĕш инкек кăна-ха!

**(Малалли пулать).**

**Н. ЕРШОВ.**

Фоторепортаж

# Ака ĕçĕсене маларах вĕçлерĕç

Çур аки – 2011

– Пирĕн ĕçпе паллашма килтĕр пулĕ-ха? Çĕнĕ çăкăр туса илессинчи пуçламăш утăмсенче пит хĕретмерĕмĕр. Малта пыракан технологисене пурнăça кĕртсе çурхи ака-суха ĕçĕсене кĕске вăхăтра пурнăçларăмăр. Паянхи тĕп ыйту – çĕр улми çителĕклĕ лартса хăварасси тата акнăлартнă культурăсене тасасыйă пăхса ӳстересси, – терĕ çур акире вăй хуракан ака агрегачĕсене ана хĕрринче вăрлăх тиенĕ ГАЗ-53 автомашинăпа кĕтсе ларакан Валерий Валерьевич Тихомиров водитель.

Инçетри пусăра тусан вĕçтерсе пĕрин хыççăн тепри ыткăнса пыракан тăватă ака агрегачĕ ĕçлени курăнать. Анан тепĕр енче вара тепĕр тиев машини ларать. В. Тихомиров ăнлантарнă тăрăх вăл унăн ĕçтешĕ Виктор Пушкин. Минералллă удобренипе тивĕçтерет иккен вăл. Уй урлă пирĕн еннелле пĕр хĕрарăм утни курăнчĕ. Ку вăл – «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп агрономĕ Зоя Валерьяновна Степанова. Ăна хирĕç çул тытрăм.

...Çул хĕрринчи хурăнсем хушшинче куккук «каласать», хирте вара хресчен ĕçне савса тăри оркестрĕ вылять. Çак илеме пуянлатса çывăхри çĕмĕрт те илемлĕ шăршине сарса пая кĕме хатĕрленет. Пĕтĕм тавралăх чĕрĕлнĕ вăхăтра хресченĕн те ака-сухаран çывăрса юлас марччĕ. Хĕвелпе вăранса хĕвелпе çывăрма выртакан Тереçсемпе Мулкачкассисем кашни ĕçрех ĕлкĕрсе юлассишĕн тăрăшаççĕ те. Çакă вĕсен пурнăça кĕрсе пыни пире те савăнтарать, ыррине кăна шантарать.

– Эпир хыпкаланнине кайăксем те сисеççĕ. Çур аки вара кунпа мар, сехетпе иртсе пырать. Ку ĕçре хуçалăхри пĕр ĕçчен те паян алă усса лармасть. Пурте пĕр тĕллевлĕ пулни хавхаланăва ӳстерет, – терĕ Ахмане уйĕ урлă пирĕн патăмăра çитсе хуçалăхăн тĕп агрономĕ З. Степанова.

Ир-каç сивĕрех пулсан та кăнтăр кунĕнче çу кунĕ вăй илет. Хĕвел шевли лекекен çĕр пичĕ хресчен çаврăнăçулăхĕшĕн савăк пулнăн туйăнать. Кун каçа сывлăш температури 16-18 градуса çитни те çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Çакна курса тата Зоя Валерьяновна каласа панине итлесе çĕр ĕçченĕ ку тăрăхра тахçанах хĕл ыйхинчен вăраннине асăрхатăп.

Кунпа мар, сехетпе иртсе пыракан çур акире кăçал хуçалăхăн 235 гектар çуртрисем акса хăварма тиврĕ. Кун çумне çывăх кунсенче вăрлăх çитнĕ чухлĕ 10-15 гектар çĕр улми хушăнмалла. Ăна та Мулкачкассисемпе Тереçсем вăхăтра пурнăçлама хатĕр. Кунпа пĕрлех Алексей Артемьевпа Дмитрий Быков тата Александр Пушкинпа Вячеслав Пушкин механизаторсемпе Виталий Наумов, Анатолий Гордеев, Петр Иванов, Олег Степанов акаçăсен бригади 201 гектар çинчи кĕрхи культурăсене вăхăтра апатлантарнă тата сӳрелесе нӳрĕк тытса хăварнă.

– Акана 100 проценчĕпех минералллă удобренипе ирттертĕмĕр. Имçамланă вăрлăхпа пĕтĕм ака лаптăкĕсене хĕреслĕ майпа акса хăвартăмăр. Сĕрмелли-çунтармалли материалсемпе йывăрлăх пулмарĕ. Ытти çулсенчи пекех кăçал та çур акире çĕнĕлĕхсем малта пулчĕç. Урпан «Владимир» элита сортне 45 гектар, çурхи тулăн «эстер» элита вăрлăхне 43 гектар акса хăвартăмăр. Çĕнĕлĕхсене пурнăça кĕртессипе тĕллевсем татах та пур-ха, – каласа парать агроном.

Мулкачкассинчен Оринин еннелле каçсан та ĕç шавĕ лăпланни курăнмарĕ. Эпĕ пулнă кун кунта та ака ĕçĕсем вĕçленсе пыратчĕç. «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн уйхирĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне, ял хуçалăх пайĕн ертӳçине В. Калинина тĕл пултăм.

– Ĕçлекенсен тăрăшулăхне курсан çĕнĕ ĕмĕттĕллевсем вăй илеççĕ. Акă паян эпĕ çитсе курнă хуçалăхсенче пуринче те çурхи культурăсем акассипе ĕçсене юлашки гектарсем çинче пурнăçлатчĕç. Çапла вара пĕрешкел условисенчех «Оринино», «Восток» кооперативсем, В. Горбуновпа А. Афанасьев тата А. Пихтеров хресчен (фермер) хуçалăхĕсем пĕр эрне хушшинче çуртрисем акас ĕçе вĕçлерĕç. «Свобода» ăратлăх завочĕпе «Колос» чикĕллĕ яваплăхлă общество тата Ильич яч. хис. хуçалăх та ака ĕçĕсене вĕçлессипе катара тăмаççĕ, – терĕ кĕске калаçура Владимир Аркадьевич кусĕсене хиртен илмесĕр. Вăл каласа панинчен район территорийĕнчи çур акири пĕтĕмĕшле лару-тăру та куç умне тухрĕ. Умри йывăрлăхсене çĕнсех хуçалăхсем кăçал 15,5 процент элитăллă тата супер элитăллă вăрлăх акса хăварма мехел çитерчĕç.

Хуçалăхсенче кăçалхи çур акинчи уй-хир ĕçĕсен планĕ тата ĕç условийĕсем кашниншĕнех паллă. Çавăнпа та паян коллективсенче ĕç вĕресе тăрать кăна. Кашни хуçалăхрах ампарсенчен хирелле вăрлăх тиенĕ автомашинăсем ыткăнаççĕ, тепĕр çулпа вара – минералллă удобрени тиенĕ трактор-машинăсем. Хирсенчи ака агрегачĕсемпе акаçăсен канма вăхăт çук.

– Ял хуçалăхĕнче ĕçлекеншĕн кашни ĕçĕн ответлăхĕ пысăк паян. Акă хĕл каçнă выльăхсене çарана кăларасси те продуктивлăха ӳстерме пулăшать. Çакна ăнланнă май «Ударник», «Путь Ильича», «Восток» хуçалăхсем ĕне кĕтĕвĕсене çарансене кăларчĕç. Йӳçкассисем, тĕслĕхрен, эрне хушшинче пĕтĕмĕшле сĕт сăвассине пин килограма яхăн пысăклатрĕç. Хуçалăх ĕнесем валли 150 гектар ыраш калчи уйăрни питех те вырăнлă пулчĕ.

Янкăр тӳпери хĕвел самай çӳле улăхрĕ ĕнтĕ. Умра – çу кунĕсем...

**Анатолий БЕЛОВ.**



*Çуртрисем акассине ыттисенчен маларах вĕçлеме пултарнă Мулкачкассисемпе Тереççем районти нумай ĕçченшĕн ырă тĕслĕх пулса тăчĕç. Сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла): малти ретре Д. Быков, А. Артемьев, А. Пушкин механизаторсем; хыçалта П. Иванов акаçă, В. Пушкин механизатор, В. Наумов, А. Гордеев ĕçченсем.*



